27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 НОЯБРЬ 12 ВЫРСАРНИКУН 223(6718) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ҫулпуҫ доклачӗ ҫине ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе ответлер!

Этемлӗхӗн чи хӑрушӑ тӑшманне — фашистла тискер кайӑка татӑклӑн пырса ҫапса пӗтерсе тӑкас кунсем ҫывхарса килнӗ вӑхӑтра Сталин юлташӑн историллӗ сӑмахӗсем пӗтӗм тӗнчене янӑраса кайрӗҫ. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн фронтри ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен, совет халӑхӗн Отечественнӑй вӑрҫӑра тунӑ паттӑрла ӗҫӗ ҫинчен, Германие хирӗҫле коалици тӗрекленсе тата ҫирӗпленсе пыни ҫинчен, мирпе хӑрушсӑрлӑх ыйтӑвӗсем тата ирӗклӗхе юратакан халӑхсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен пирӗн аслӑ ҫулпуҫ усӑмлӑ та пурне те ӑнланмалла каласа пачӗ.

Сталин юлташӑн ӗмӗр асран каймин доклачӗ пире хамӑрӑн пуласлӑха витӗр курса тӑма вӗрентет, эпир тӑшмана ҫитес вӑхӑтрах ҫӗнтерес шанчӑка ӳстерет, вӑрҫӑн татӑклӑ тапхӑрӗнче кӗрешме пире ҫӗнӗ вӑй парса хӗҫпӑшаллантарать. Ҫулпуҫӑн чӗре патне пырса вырнаҫакан сӑмахӗсем — пирӗн халӑха ӗҫпе кӗрешӗве мобилизацилекен калама ҫук пысӑк вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Кашни боецпа командир, кашни рабочипе хресчен, кашни интеллигент Сталин юлташӑн доклачӗпе хавхаланать, унтан ҫӗнӗ вӑй-хӑват илет, татах та паттӑртарах кӗрешӗве ҫӗкленет. Пирӗн Тӑван ҫӗршыв патриочӗсем хӑйсен юратнӑ ҫулпуҫӗ чӗнсе калани ҫине ӗҫ фронтӗнче мӗнпур вӑя хурса кӗрешнипе ответлеҫҫӗ; фронтри боецсемпе командирсем, хӑйсен генилле полководецӗ панӑ приказ тӑрӑх, тӑшмана юлашки хут пырса ҫапма хӑйсен хӗҫпӑшалне татах та ытларах туптаса ҫивӗчлетеҫҫӗ, хӑйсен вӑрҫӑри мастерлӑхне ӳстереҫҫӗ.

Совет халӑхӗн тылри паттӑрла ӗҫне хакласа, Сталин юлташ ҫапла каларӗ:

«Пирӗн рабочи класс хӑйӗн мӗнпур вӑйне ҫӗнтерӳ тунӑ ҫӗре парать, производство техникине пӗр чарӑнмасӑр ҫӗнетсе, лайӑхлатса пырать, промышленность предприятийӗсен хӑватне ӳстерсе пырать, ҫӗнӗ фабрикӑсемпе заводсем тӑвать. Совет Союзӗн рабочи класӗ ҫак вӑрҫӑра паттӑрла аслӑ ӗҫ турӗ.

Пирӗн интеллигенци техникӑпа культура ӗҫӗнче ҫӗнӗрен ҫӗнӗ майсем шухӑшласа кӑларас ҫулпа пырать, куҫҫухнехи техникӑна ӑнӑҫлӑн малалла аталантарать, унӑн ҫитӗнӗвӗсемпе Хӗрлӗ Ҫар валли хӗҫпӑшал тунӑ ҫӗрте пултаруллӑн усӑ курать. Совет интеллигенцийӗ хӑйӗн пултаруллӑ ӗҫӗпе тӑшмана ҫапса аркатас ӗҫе нимӗнпе хакласа ҫитерме ҫук парне кӳчӗ.

...Хӗрлӗ Ҫар вӑрҫӑн тӑваттӑмӗш ҫулӗнче те, колхоз хресченӗсем тӑрӑшнипе пула, апат-ҫимӗҫ ҫитменнине курмасть. Колхозниксемпе колхозницӑсем — рабочисемпе интеллигенцие апат-ҫимӗҫ, промышленноҫа вара—чӗртавар парса тӑраҫҫӗ, фронт валли хӗҫпӑшалсемпе снаряжени туса кӑларакан заводсемпе фабрикӑсене йӗркеллӗ ӗҫлеме май параҫҫӗ. Пирӗн колхоз хресченӗсем, Тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйсен тивӗҫне пӗтӗмӗшпех ӑнланса тӑрса, тӑшмана ҫӗнтерес ӗҫре Хӗрлӗ Ҫара активлӑн пулӑшаҫҫӗ».

Аслӑ ҫулпуҫ совет халӑхӗн ӗҫне ҫакӑн пек пысӑка хурса хаклани рабочисемпе колхозниксене тата совет интеллигенцине малашне татах та вӑйлӑнрах, тухӑҫлӑрах, лайӑхрах ӗҫлеме хаваслантарать. Вӑл ҫапла пулмалла та, мӗншӗн тесен, Сталин юлташӑн ҫав сӑмахӗсене вуласа, кашни рабочипе хресчен тата интеллигент хӑйӗн ӗҫӗ фронта пулӑшас енӗпе мӗнле пысӑк вырӑн йышӑннине туйса илет.

Пирӗн республикӑри рабочисемпе колхозниксем фронта пулӑшас тесе пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме тӑрӑшрӗҫ. Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура мала тухса пыракан предприятисем республикӑра темиҫе те шутланаҫҫӗ. Хӑйсен программине тултарса пыракан промкомбинатсемпе артельсем сахал мар. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтра чӑваш халӑхӗ Тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйӗн обязательствисене яланах пурне те чыслӑн пурнӑҫа кӗртсе пычӗ. Республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пурне те ӑнӑҫлӑн вӗҫлесе, государствӑна тырӑ памалли тата МТС ӗҫленӗшӗн тӳлемелли плана срокчен пурнӑҫа кӗртсе, Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 500 пин пӑт тырӑ пачӗҫ, халӗ планран ирттерсе 740 пин пӑт ҫӗрулми парассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, республикӑри ӗҫҫыннисем СССР оборонин фондне темиҫе миллионшар тенке укҫа парса пулӑшрӗҫ.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклад тата вӑл ноябрӗн 7-мӗшӗнче кӑларнӑ приказ республикӑри ӗҫҫыннисем хушшинче патриотизмла ҫӗнӗ ҫӗкленӳ пуҫарса ячӗҫ. Ҫулпуҫӑн доклачӗпе тата приказӗпе хавхаланса, тӑшмана татӑклӑн пырса ҫапса аркатса тӑкас куна ҫывхартас тесе, рабочисемпе работницӑсем хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ, производство планне срокчен тултарма, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, продукци пахалӑхне лайӑхлатма пулса большевикла сӑмах параҫҫӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пӗтӗмпех вӗҫлесе ҫитерме, государство умӗнчи пур парӑмсене те парса татма, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе тӗпренех вӑйлатма, ҫитес ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе ҫитме пулса обязательствӑсем илеҫҫӗ.

— Хамӑрӑн юратнӑ ҫулпуҫӑн Сталин юлташӑн доклачӗ пире ҫӗнӗ паттӑр ӗҫсем тума хавхалантарать, ҫӗнӗ вӑйпа хастарлӑх парса ҫӗклентерет. Сталин юлташ совет ҫыннисен ӗҫне пысӑка хурса хакларӗ. Пирӗн ӗҫе ҫавӑн пек пысӑка хурса хакланине эпир тӳрре кӑларӑпӑр. Ҫулпуҫ чӗнсе калани ҫине ответлесе, манӑн бригада стахановла вахтӑна тӑчӗ, эпир сменӑри нормӑна 150 процентран кая мар тултарма пулатпӑр. Тӑшмана татӑклӑнах аркатса тӑкас тесе, татах та вӑйлӑрах ӗҫлес килет, — тенӗ Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводри ҫамрӑксен фронтовой бригадин бригадирӗ Красновейкина юлташ. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явма пухӑннӑ митингра тухса каласа.

— Тӑшмана аркатса тӑкас вӑхӑт ҫывхарни мана чӗререн савӑнтарать. Пире нимӗҫ чуралӑхӗнчен Сталин юлташ ҫӑлса хӑварчӗ. Сталин юлташ пирӗн, колхозниксен, ӗҫне пысӑка хурса хаклани пире фронта пулӑшас тӗлӗшпе тата лайӑхрах ӗҫлеме вӑй парать. Эпӗ государствӑна пур тӗрлӗ парӑмсене те парса татнӑ, ыттисене те кӗске вӑхӑтрах парса татма сӗнетӗп,— тенӗ Красноармейски районри «Ҫӗнӗ ял» колхоз членӗ Яковлев юлташ.

Ҫакӑн пек ответлеҫҫӗ пирӗн ҫӗршывӑн сумлӑ патриочӗсем аслӑ ҫулпуҫӑн историллӗ сӑмахӗсем ҫине.

Халӗ республикӑри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсемпе МТС-сенче Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне ӑнлантарса парас майпа пухусемпе митингсем пулса иртеҫҫӗ. Партипе совет тата комсомол организацийӗсен задачи ҫакӑнта пулса тӑрать: ҫулпуҫӑн доклачӗпе тата приказӗпе, пирӗн малашнехи кӗрешӗвӗн программи пулса тӑракан ҫак паха документсемпе кашни ӗҫҫыннине паллаштармалла, вӗсене тӗплӗн вӗренес ӗҫе организацилемелле, ҫапла вара рабочисемпе колхозниксене тата интеллигентсене хамӑр умра тӑракан мӗнпур ӗҫсене ӑнӑҫлӑн та чыслӑн пурнӑҫлама мобилизацилемелле.

Сталин юлташ доклачӗ ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума вӑй-хӑват парать

КАНАШ, ноябрӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Хулари предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем Сталин юлташ ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ доклада митингсемпе пухусенче сӳтсе-яваҫҫӗ. Вӗсем, аслӑ ҫулпуҫ тылри ӗҫҫыннисен хастарлӑ ӗҫне пысӑка хурса хакланипе савӑнса, ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Вагонсем юсакан заводри вагонсем тӑвакан цех коллективӗ ҫулталӑк вӗҫлениччен планран ирттерсе юр тасатакан икӗ вагон тума, вагонсем юсакан цех планран ирттерсе 5 вагон юсама сӑмах панӑ.

Канаш станцийӗнче ӗҫлекенсем те, ҫулпуҫ докладне саламласа, ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума пулаҫҫӗ. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадин бригадирӗ Мансуров юлташ тата станцири дежурнӑй Андронов юлташ вагонсем чарӑнса тӑрассине нормӑпа пӑхниччен 7 сехет чухлӗ чакарма пулнӑ. Составитель Данилов юлташ кулленхи нормӑна 160 процент таран тултарма сӑмах панӑ.

Депора пулса иртнӗ митингра мастер Шигунов юлташ сӑмах каланӑ.

— Сталин юлташ доклачӗ, — тенӗ вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче, — пире ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума вӑй-хӑват парать. Эпӗ, нимӗҫ тискер кайӑкне хӑйӗн шӑтӑкӗнчех пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара ытларах пулӑшас шутпа, Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарас ятпа социализмлӑ ӑмӑрту пуҫарма чӗнетӗп.

Депори рабочисем унӑн сӑмахне хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Автоматчиксен бригадин бригадирӗ Ермошин юлташ, сменӑри задание 150 процент тултарма пулса, Улатӑрти депона социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнме сӗнӳ пачӗ. Унӑн бригади кӑҫал хӗле хатӗрленсе ҫитни ҫинчен пуринчен малтан паспорт илнӗ. Ҫавӑн пекех машинист-орденоносец Николаев юлташ та кулленхи нормӑна яланах ирттерсе тултарма обязательство илнӗ. Тимӗрҫӗсем Солдатченковпа И. Николаев юлташсем нормӑна 150 процент таран тултарса пыма пулнӑ.

Сталин юлташӑн докладне итленӗ хыҫҫӑн, ҫамрӑк электровсарщик комсомолец Ванюшин ҫапла каланӑ:

— Сталин юлташ совет ҫамрӑкӗсен ӗҫне пысӑка хурса хакларӗ. Аслӑ ҫулпуҫ шаннине эпир, совет ҫамрӑкӗсем, малашне те чыслӑн тӳрре кӑларса пырӑпӑр. Эпӗ малашне кулленхи нормӑна 170 процентран кая мар тултарса пыма сӑмах паратӑп.

Сталин юлташӑн докладне сӳтсе-явас ыйтупа пухӑннӑ митинг пир-авӑр фабрикинче те пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Смена мастерӗ Цибульский юлташ, хӑйӗн сменинче ӗҫлекен рабочисен ячӗпе, тӑваттӑмӗш кварталти плана срокчен тултарма, планран ирттерсе 72 пин метр пусма-тавар туса кӑларма пулни ҫинчен пӗлтерчӗ. Унӑн примерӗ тӑрӑх мастер помощникӗ Шушева юлташ та хӑйӗн сменипе планран ирттерсе 43 пин метр пусма-тавар туса кӑларма обязательство йышӑннӑ. Ултӑ станокпа ӗҫлекен ткачиха Антонова юлташ митингра ҫакна пӗлтернӗ:

— Эпӗ ноябрьпе декабрь уйӑхӗсенче октябрь уйӑхӗнчинчен лайӑхрах ӗҫлеме пулатӑп. Сталин юлташ тӑшмана хӑйӗн йӑвинчех пӗтерсе тӑкасси ҫинчен каларӗ пулсан, унӑн сӑмахӗсем пурнӑҫа кӗреҫҫӗ. Ҫӗнтерӳ сехетне ҫывхартма пӗтӗм вӑй-хӑвата паратӑп.

Предприятисемпе учрежденисенче Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне сӳтсе-явнӑ май производствӑри активлӑх ӳссех пырать.

Л. ИВАНОВ.

Шупашкарти предприятисенчи митингсемпе пухусем

Сталин юлташӑн ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ доклачӗ пичетленнӗ хаҫатсене илсенех Шупашкарти предприятисенче митингсемпе пухусем пулса иртме тытӑнчӗҫ. Ҫав митингсемпе пухусенче Сталин юлташӑн докладне вуланӑ хыҫҫӑн рабочисемпе работницӑсем хӗрӳллӗ сӑмахсем тухса калаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче Хӗрлӗ Ҫарпа фронта пулӑшассишӗн татах та хастарлӑнрах ӗҫлеме обязательствӑсем илеҫҫӗ. Ҫапла, чӑлха фабрикинчи стахановкӑсем Есина, Булых, Гурьева, Яшкина тата ытти юлташсем ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла ӳстерсе пыма пулнӑ. Вӗсем пӗтӗм фабрика коллективӗн шухӑш-кӑмӑлне каласа панӑ. Фабрика коллективӗ ҫулталӑкри плана срокчен тултарма сӑмах панӑ.

Пир-авӑр фабрикин коллективӗ те Сталин юлташ чӗнсе каланине ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе ответлеме пулать. Фабрикӑри стахановкӑсем Андреева, Дмитриева тата ытти нумай юлташсем нормӑна 130 процентран кая мар тултарса пыма сӑмах панӑ. Фабрика коллективӗ хӑй йышӑннӑ обязательствӑра ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, продукци пахалӑхне лайӑхлатма тата унӑн хӑйне ларакан хакне йӳнетме палӑртнӑ.

Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне уйрӑм кӗнеке туса кӑларнӑ

Политика литературин государство издательстви Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав Совечӗн Мускав хулинчи партипе общество организацийӗсемпе пӗрле 1944 ҫулхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче пулнӑ чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ доклад тата Верховный Главнокомандующин Совет Союзӗн Маршалӗн Сталин юлташӑн 1944 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшӗнчи приказне уйрӑм кӗнеке туса кӑларнӑ.

Кӗнеке тиражӗ — 5.500.000 экземпляр. (ТАСС).

Депутатсене пӗлсе тӑма

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН VIII-мӗш СЕССИЙЕ ШУПАШКАРТА 1944 ҪУЛХИ НОЯБРӖН 15-мӗшӗнче, 18 СЕХЕТРЕ, СОВЕТСЕН ҪУРЧӖН ЛАРУ ЗАЛӖНЧЕ ӲҪАЛАТЬ.

Совет гражданӗсене Германирен тата вӑл оккупацилене ҫӗршывсенчен Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлекен СССР Совнаркомӗн уполномоченнӑйӗ Ф. И. Голиков генерал-полковник пӗлтерни

Хӗвеланӑҫӗнчи ирӗке кӑларнӑ территорисем ҫинче совет гражданӗсем, нимӗҫ чуралӑхӗнче пулнӑскерсем, нумай тупӑнни ҫинчен пӗлтерни совет ҫыннисен анлӑ ушкӑнӗсене питех те интереслентернине кура, ТАСС корреспонденчӗ совет гражданӗсене Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлекен СССР Совнаркомӗн уполномоченнӑйне Ф. И. Голиков генерал-полковника ҫав граждансене Тӑван ҫӗршыва тавӑрмалли плансем пирки ыйту панӑ.

Корреспондент ыйтӑвӗ ҫине Голиков юлташ ҫакӑн пек ответленӗ:

«Хӗрлӗ Ҫарпа пирӗн союзниксен ҫарӗсем тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳсене пула, нумай пин совет ҫыннисем тӑшман тыткӑнӗнчен ҫӑлӑнса тухнӑ. Франци, Бельги, Голланди, Итали, Люксембург, Великобритани, Египет, Ҫурҫӗр Африка территорийӗсем тӑрӑх тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен территорийӗсем тӑрӑх та сапаланса пӗтнӗскерсем, вӗсем хӑйсене Тӑван Совет ҫӗршывне тавӑрасса кӗтеҫҫӗ.

Хамӑрӑн граждансен ҫав хӗрӳллӗ ӗмӗтне май килнӗ таран хӑвӑртрах пурнӑҫа кӗртмелле тӑвас тесе, Совет правительстви пур мерӑсене те йышӑнать. Темиҫе вуншар пин совет гражданне Финляндирен, Румынирен, Польшӑран Тӑван ҫӗршыва куҫарса килнӗ те ӗнтӗ; малтанхи вунӑ пин совет гражданӗ Англирен килсе ҫитнӗ; совет гражданӗсене Тӑван ҫӗршыва тавӑрма хатӗрленес тӗлӗшпе Францире, Бельгире, Голландипе Люксембургра пысӑк ӗҫсем пулса пыраҫҫӗ.

Совет гражданӗсене Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес ӗҫе организацилессине чи элементарлӑ ӗҫсенчен — хамӑрӑн граждансене шыраса тупассинчен, вӗсене Тӑван ҫӗршыва тавӑрас пирки пӗлтерессинчен тата вӗсене пухассинчен тытӑнма лекет. Ҫав ӗҫ малтан шухӑшланӑ пекех ҫӑмӑл мар, мӗншӗн тесен союзниксен ҫарӗсем ирӗке кӑларнӑ территорисем ҫине лексен те пирӗн нумай ҫынсене ҫаплах тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннисен лагерӗсенче, хӑш чухне тата нимӗҫсӗн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннийӗсемпе пӗрле те хупса усраҫҫӗ. Пирӗн ҫынсем ҫав лагерьсенче нимӗҫсене пӑхӑнса тӑни ҫинчен калакан фактсене те палӑртнӑ. Вӗсене чылай чухне ҫав тери начар условисенче тытса усраҫҫӗ: вӗсене начар тумлантарнӑ, япӑх тӑрантараҫҫӗ, медицинӑпа санитари тӗлӗшӗнчен пулӑшу памаҫҫӗ, тӗрлӗ майсемпе хӗсӗрлеҫҫӗ.

Кунта эпир пӗр тӗслӗх илсе кӑтартасшӑн: советӑн тыткӑна лекнӗ ҫар ҫыннийӗсен 72 ҫынтан тӑракан ушкӑнӗ нимӗҫсен лагерӗнчен Италие тарса каҫнӑ та унта Прадо районӗнче нимӗҫсене хирӗҫ партизанла кӗрешӳ пуҫласа янӑ, ҫавӑн пек ҫапӑҫса пырса, вӗсем союзниксен ҫарӗсемпе пӗрлешнӗ, хӑйсем тыткӑна илнӗ нимӗҫ салтакӗсен пысӑк ушкӑнне союзниксен аллине панӑ. Партизансен отрядне тивӗҫлӗ условисем туса парас тата ҫав ҫынсене тӑван ҫӗршыва тавӑрӑнма пулӑшас вырӑнне, вырӑнти ҫар администрацийӗ вӗсене концентрациллӗ лагере нимӗҫсемпе пӗрле хупса лартнӑ. Совет ҫыннисене ҫав лагерьте 10 талӑк хушши тытса усранӑ, вӗсене хӑйсем ушкӑнпа протест панӑ хыҫҫӑн кӑна ирӗке кӑларнӑ.

Чылай чухне ирӗке кӑларнӑ территорисем ҫинче пирӗн ҫынсене хӑвӑртрах пӗрле пуҫтарӑнса Тӑван ҫӗршыва куҫса килес ӗҫре чӑрмантараҫҫӗ.

Ирӗке тухнӑ совет гражданӗсем тӗлӗшпе пулса иртекен ҫавӑн пек мӗнпур йӗркесӗрлӗхсем союзниксен влаҫӗсен хӑшпӗр представителӗсем союзлӑ державӑн гражданӗсем тӗлӗшпе хӑйсен мӗн тумаллине ӑнланманнинчен килет пулмалла. Совет правительстви ҫав йӗркесӗрлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе ҫирӗп мерӑсем йышӑнать. Ҫав йӗркесӗрлӗхсем чи ҫывӑх вӑхӑтрах пӗтӗҫ тесе шухӑшлама пур сӑлтавсем те пур.

Ҫакӑн пек тӗслӗхсене те сахал мар тӗл пулма пулать: Совет государстви ҫине тӑшманла пӑхакан ҫынсем тӗрлӗрен ултавлӑ, провокациллӗ майсемпе пирӗн граждансен шухӑшӗсене пӑсма тата вӗсене Совет ҫӗршывӗ вӗсем ҫинчен маннӑ, вӗсене урӑх хӑйӗн гражданӗсем тесе шутламасть текен тискер ултава ӗнентерме хӑтланаҫҫӗ. Ҫав тӑшманла ҫынсем пирӗн Тӑван ҫӗршыв ҫыннисене ҫапла каласа хӑратма пӑхаҫҫӗ: вӗсем Тӑван ҫӗршыва тавӑрӑнас пулсан, вӗсене вара хыттӑн айӑплӗҫ, теҫҫӗ. Ҫавӑн пек ухмахла сӑмахсене хирӗҫлени те ытлашши.

Нимӗҫ чуралӑхне лекнӗ совет гражданӗсем ҫинчен Совет ҫӗршывӗ манман, вӗсемшӗн Совет государстви тимлӗн тӑрӑшать. Вӗсене килте Тӑван ҫӗршыв ывӑлӗсем вырӑнне хурса йышӑнӗҫ. Советсен ертсе пыракан ушкӑнӗсене ҫапла шутлаҫҫӗ: нимӗҫсем пусмӑрласа тата терорласа хӑратнине пула хӑшпӗр совет гражданӗсем ССР Союзӗн интересӗсене хирӗҫле ӗҫсем тунӑ пулин те, вӗсем Тӑван ҫӗршыва тавӑрӑнса хӑйсен тивӗҫне тӳрӗ кӑмӑллӑн пурнӑҫлама тытӑнсан, вӗсене ответ тыттармаҫҫӗ.

Пиншер совет ҫыннисем нимӗҫ пусмӑрӗнче пурӑннӑ чухне тӑшмана хирӗҫ геройла кӗрешнине кӑтартса паракан фактсем питӗ нумай. Ҫапла, сӑмахран, ҫакӑ пуриншӗн те паллӑ: Франци территорийӗ ҫинче вырӑссен, грузинсен, армянсен, таджиксен, тутарсен, украинецсемпе белоруссен, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе офицерӗсем пулнӑскерсен, нимӗҫсем патне тыткӑна лекнӗ хыҫҫӑн Франци территорийӗ ҫине хӑваласа пынӑскерсен, пысӑк йышӗ нимӗҫ командованине хирӗҫ пӑлхав пуҫласа янӑ та алла хӗҫпӑшал тытса ушкӑнӗ-ушкӑнӗпех француз партизанӗсемпе пӗрлешнӗ, вӗсем француз партизанӗсемпе пӗрле Францие тата Бельгие нимӗҫсенчен ирӗке кӑларассишӗн кӗрешнӗ. Тӑван ҫӗршыв ҫавӑн пек ывӑлсемпе тивӗҫлипех мухтанма пултарать. Тӑван ҫӗршыва тавӑрӑнакан мӗнпур совет гражданӗсене ылханлӑ тӑшмана ҫапса аркатас тата ҫӗнтерӳ тӑвас ӗҫе ҫийӗнчех хутшӑнма, пӗрисене — алла хӗҫпӑшал тытса кӗрешме, теприсене — производствӑра ӗҫлеме, виҫҫӗмӗшӗсене — культура ӗҫӗнче ӗҫлеме пур майсене те туса параҫҫӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех вӗсене пурне те хӑйсен пурнӑҫӗсене юсас, сывалас, вӗренес тата ытти тӗлӗшпе тивӗҫлӗ материальнӑй пулӑшу параҫҫӗ.

Нимӗҫсем нумай пин совет ачисене амӑшӗсен аллинчен тыса илсе кайнӑ. Ҫав ачасене нумайӗшне тӑван ашшӗ-амӑшӗсене тавӑрса параҫҫӗ, ыттисене вара — ача ҫурчӗсене тата санаторисене вырнаҫтараҫҫӗ.

Акӑ нумай тӗслӗхсенчен пӗри: ҫак кунсенче Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем Карпат леш енчи Украинӑри Мукачево хулинчен инҫех мар вырӑнта нимӗҫсен аллинчен 200 совет ачине ҫӑлса илнӗ, ҫав ачасем икӗ ҫул ҫурӑран пуҫласа 15 ҫула ҫитиччен пулнӑ. Нимӗҫсем вӗсене, Германие илсе каяс тесе, икӗ уйӑх хушши чугун ҫулсем тӑрӑх сӗтӗрсе ҫӳренӗ. Нумай ачасем ҫул ҫинче чирлесе тата начарланса вилсе пӗтнӗ, ҫавӑнпа пӗрлех чирлӗ ачасене нимӗҫсем хӑйсем нумай вӗлернӗ.

Халӗ ҫав ачасене ҫӑлса хӑварнӑ, вӗсене тумтирсем панӑ, эмеллесе сыватаҫҫӗ, тӑрантараҫҫӗ, часах тӑванӗсем аллине тавӑрса параҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра совет гражданӗсене Тӑван ҫӗршыва куҫарса килес тӗлӗшпе ӗҫлекен СССР Совнарком уполномоченнӑйӗн представителӗсем чылай ҫӗршывсене ҫитсе ӗҫлеме тытӑннӑ, ыттисем вара ҫав тӗлӗшпе ӗҫлемешкӗн тӗрлӗ ҫӗршывсене тухса кайма хатӗр тӑраҫҫӗ.

Пирӗн тӗп ӗҫ умра-ха. Чуралӑха лекнӗ совет ҫыннисен пысӑк йышне халӗ ирӗке кӑларман-ха, вӗсем Германи территорийӗ ҫинче асапланса пурӑнаҫҫӗ.

Тӑшмана пуҫӗпех тата татӑклӑнах ҫапса аркатас кун ҫывӑх ӗнтӗ. Ҫав кун хамӑрӑн совет ҫыннисене пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ хаваслӑ кун пулӗ. Вӗсем пурте, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва тавӑрӑнса, фронтра тӑшманпа ҫапӑҫакан боецсен ретӗнче, хамӑрӑн хӑватлӑ государствӑна малалла тӗреклетсе пыракан строительсен ретӗнче хӑйсен вырӑнӗсене тупӗҫ. Нимӗҫ чуралӑхӗнчен ирӗке кӑларнӑ совет ҫыннисем валли тӑван килӗсене, хӑйсен ҫемьисене тавӑрӑнса ӗҫе тытӑнма, хамӑрӑн халӑхшӑн, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывшӑн пӗтӗм чун-чӗререн парӑнса ӗҫлеме анлӑ майсем пуласҫӗ».

Польша халӑхӗн праҫникӗ ячӗпе М. И. Калинин, И. В. Сталин тата В. М. Молотов янӑ телеграммӑсем

Ноябрӗн 11-мӗшӗнче Польша халӑхӗн праҫникне — Польшӑн никама пӑхӑнманлӑх кунне — уявланӑ май М. И. Калинин юлташ, И. В. Сталин юлташ тата В. М. Молотов юлташ Болеслав Берут господина тата Э. Осубка-Моравский господина ҫакӑн пек телеграммӑсем янӑ.

Б. Берут господина,
Польша Халӑх Совечӗн Председательне

Польша халӑхӗн праҫникӗ ячӗпе Сире туслӑ салам яратӑп. Эпӗ ҫакна шанса тӑратӑп: Совет Союзӗпе Польшӑн ҫак вӑрҫӑра туптанса ҫирӗпленнӗ тата хӑйӗн уссине кӑтартнӑ туслӑхӗ гитлеризма ҫӗнтерес ӗҫе хӑвӑртлатӗ тата пирӗн тӑванла халӑхсен лайӑх пурнӑҫӗпе телейӗн никӗсӗ пулса тӑрӗ.

М. КАЛИНИН.

Польша Халӑх Совечӗн Председательне
Б. Берут господина,
Польша Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председательне
Э. Осубка-Моравский господина

Польша халӑхӗн праҫникӗ кунӗнче Сире хӗрӳллӗн саламлатӑп тата вӑйлӑ, никама пӑхӑнман демократиллӗ Польшӑна ҫӗнӗрен ура ҫине тӑратас ӗҫре малашне те ҫитӗнӳсем тума сунатӑп.

Пирӗн халӑхсен тӑванла союзӗ тата вӗсем нимӗҫ пусмӑрҫисене хирӗҫ пӗрле кӗрешни, Польшӑпа совет воинӗсем юн тӑкса ҫирӗплетнӗскер, ҫитес вӑхӑтрах Польшӑна нимӗҫ пусмӑрлӑхӗнчен пӗтӗмпех ирӗке кӑларӗ.

И. СТАЛИН.

Польша Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн ют ҫӗршыв ӗҫӗсен отделӗн руководительне
Э. Осубка-Моравский господина

Польша халӑхӗн праҫникӗ ячӗпе Сире тата пӗтӗм Польша халӑхне чунтан-чӗререн саламлатӑп тата Польшӑн пӗтӗм ҫӗрне нимӗҫ пусмӑрҫисенчен часрах ирӗке кӑларма сунатӑп.

[illegible] мана — гитлерла Германие — хирӗҫ пынӑ хаяр кӗрешӳсенче ҫуралса ӳснӗ туслӑх Польшӑпа Совет Союзӗн ырлӑхӗшӗн кулленех ҫирӗпленсе пырӗ.

В. МОЛОТОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 10-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинче, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ, вӑл шутра — ХЕЕ БАБА, ХЕЕ ПАПИ, МАРГИТ, БОРШОД СЕМЕРЕ, ТАРПИСЕНТМИКЛОШ, ПЕЛЬ, МАЙОР, ПИЛИШ ятлӑ пысӑк ялсем та ЧИНЧЕТАНЬЯ ятлӑ чугун ҫул станцийӗ. Ҫапла, пирӗн ҫарсем БУДАПЕШТ хулипе МИШКОЛЦ хули хушшинчи чугун ҫула татнӑ. Ноябрӗн 8-мӗшӗпе 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ТИССА шывӗпе ДУНАЙ шывӗ хушшинче венгерсемпе нимӗҫсен 4.100 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Ноябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 15 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

☆ ☆ ☆

Венгрире, Тисса шывӗпе Дунай шывӗ хушшинче, пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем, гитлеровецсен контратакисене сире-сире ярса, Тисса шывӗн хӗвеланӑҫ хӗринче унччен туртса илнӗ плацдарма асӑлатнӑ. Будапешт хулипе Мишколц хули хушшинчи чугун ҫула нимӗҫсем уйрӑмах хытӑ хӳтӗлесе ҫапӑҫнӑ. Хаяр ҫапӑҫура совет пехотинецӗсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та Маргит ялне туртса илнӗ. Ҫапла вара, пирӗн ҫарсем Будапешт хулипе Мишколц хули хушшинчи чугун ҫула татнӑ. Гитлеровецсем совет чаҫӗсене каялла ывӑтса яма хӑтланнӑ, анчах та вӗсен контратакисем пӗри те ӑнӑҫман. Ҫав участокра кун-каҫиччен нимӗҫсемпе венгерсен 700 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ, 9 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине персе ҫӗмӗрнӗ. Трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра — хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 тупӑ, 12 хир туппи, 2 радиостанци, ҫар пурлӑх склачӗ тата боеприпассен пысӑк обозӗ. Ҫавӑн пекех Цеглед хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнелле те хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Тӑшман хӑйӗн Будапешт хулине хӳтӗлекен группировкине [illegible] ҫапӑҫусене эсэсовецсен танковӑй дивизине тата пӗр кавалери дивизине кӗртсе янӑ. Артиллери кӗске вӑхӑт хушши персе хатӗрленӗ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем тӑшмана атакӑланӑ та, малалла куҫса пырса, тӗреклетнӗ Пилиш ятлӑ пысӑк пункта туртса илнӗ. Тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухату кӳнӗ.

* * *

Хӗвелтухӑҫ Пруссире пирӗн ҫарсем, тупӑсемпе тата минометсемпе персе, тӑшманӑн персе тӑракан вырӑнӗсене тата тӗрлӗ вырӑнта пухӑна-пухӑна тӑнӑ пехотине пӗтере-пӗтере тӑкнӑ. Пӗр ҫарри подразделенисем нимӗҫсене сасартӑк атакӑланӑ. Пуҫланса кайнӑ тытӑҫура совет боецӗсем гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити вӗлерсе тӑкнӑ, чылайӗшне тыткӑна илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн артиллеристсемпе минометчиксем тӑшман позицийӗсене вӑйлӑн пенӗ. Нимӗҫсен артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата пӗр боеприпас складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Пултуск хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн малти подразделенисем ҫапӑҫса разведка тума хӑтланнӑ гитлеровецсен атакине сирсе янӑ. Пирӗн позицисем патнелле пымалли вырӑнсенче тӑшманӑн 50 вилли ытла выртса юлнӑ. Нимӗҫсен хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппи мина ҫине пырса кӗрсе сирпӗнсе кайнӑ та ҫунса кайнӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫар енне нимӗҫсен ҫарне ирӗксӗр мобилизациленӗ поляксем куҫаҫҫӗ. Нимӗҫсен 291-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 505-мӗш полкран тарса каҫнӑ салтак Тадеуш К. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ — поляк, нимӗҫсене пӗтӗм чунтан курайманӑп, мӗншӗн тесен вӗсем, Польшӑна чуралантарса, поляк халӑхне пӑваҫҫӗ. Ҫак ҫулхи январь уйӑхӗнче мана ирӗксӗрех нимӗҫсен ҫарне илчӗҫ. Вӗсем мана нимӗҫсемшӗн хам юна юхтарса ҫапӑҫтарасшӑн пулчӗҫ. Фронта лексен, май килнӗ пӗрремӗш хутрах эпӗ Хӗрлӗ Ҫар енне каҫрӑм. Эпӗ юлташсенчен Совет Союзӗнче Польша ҫарне туни ҫинчен пӗлтӗм. Манӑн пӗртен-пӗр ӗмӗт ҫав ҫар ретне тӑрса, алла хӗҫпӑшал тытса, нимӗҫсемпе ҫапӑҫасси. Эпӗ Гитлер палачӗсене вӗсем поляк халӑхне кӳнӗ асаппа хуйхӑшӑн тивӗҫлипе тавӑрасшӑн ҫунатӑп».

Нимӗҫсен 97-мӗш горнострелковӑй дивизийӗнчи 207-мӗш полкран тарса каҫнӑ салтак Казимир Л. ҫапла каласа панӑ: «Нимӗҫсем поляксене ҫын картне лартман ҫынсем. «пулса ҫитеймен ҫынсем» теҫҫӗ. Гитлеровецсем манӑн тӑван ҫӗршыва ҫаратаҫҫӗ, асаплантараҫҫӗ. Поляксен шкулӗсемпе костелӗсене хупа-хупа лартнӑ. Темиҫе пин учителе, врача тата ксендза гестапо тӗрмисенче асаплантарса вӗлернӗ. Хӗрлӗ Ҫар Польша ҫӗрӗн пӗр пайне нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларни ҫинчен пирӗн пата хыпар ҫитнӗччӗ. Эпӗ поляксен ҫарне каясшӑн, вара унта нимӗҫсене пӗр хӗрхенмесӗр тавӑрма тӑрӑшӑп».

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТĂ ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ ТАВАТТАМĔШ КВАРТАЛТИ ПЛАНА НОЯБРĔН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Плана тултарни (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăн йышăннă: Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе
Куславкка	67,0	50,0	1	2
Йĕпреç	48,0	54,0	2	1
Сĕмĕрле	44,8	18,0	3	25
Шупашкар	43,0	32,0	4	9
Шăхасан	43,0	44,0	5	4
Красноармейски	41,0	43,0	6	7
Елчĕк	40,0	38,0	7	10
Пăрачкав	39,0	32,0	8	17
Октябрьски	39,0	48,0	9	3
Кувакино	37,0	17,0	10	26
Хĕрлĕ Чутай	34,0	18,0	11	23
Комсомольски	33,0	34,0	12	6
Первомайски	33,0	41,0	13	5
Чкаловски	33,0	20,0	14	21
Калинински	29,0	29,0	15	11
Сĕнтĕрвăрри	27,0	14,0	16	27
Чурачăк	25,0	20,0	17	12
Çĕрпӳ	25,0	20,0	18	20
Етĕрне	24,0	25,0	19	15
Тăвай	24,0	22,0	20	19
Ăлĕк	21,0	33,0	21	8
Вăрмар	19,0	27,0	22	14
Канаш	17,0	26,0	23	16
Шăмăршă	16,0	18,0	24	24
Советски	15,0	22,0	25	18
Муркаш	15,0	19,0	26	22
Вăрнар	13,0	26,0	27	13
Ишлей	11,0	5,0	28	28

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

СТУДЕНТСЕМ ВАЛЛИ ЛЕКТОРИ

ВЛКСМ Канаш хула комитечĕ педучилищĕре, финанс техникумĕнчи студентсемпе вăтам шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсем валли лектори организациленĕ. Лектори çак ыйтусем тăрăх лекцисем иртересрĕ палăртнă: Совет Союзĕн çамрăксем Отечественнăй аслă вăрçăра, Легендарлă Сталин çамрăксене воспитани парасси çинчен; Суворов — вырăссен аслă полководецĕ. Лекцисене уйăхра икĕ хут иртересçĕ. Иртнĕ уйăхра икĕ лекци вуласа панă.

ĔÇШЕН ХУШСА ТӲЛЕМЕЛЛИ ЙĔРКЕ ТĂРĂХ 100 КИЛОГРАММ ПЫЛ ИЛЕТ

Красноармейски районĕн «Красный Борец» колхоз членĕ Нистин Петрова юлташ иккĕмĕш çул ĕнтĕ пчеловод пулса ĕçлет. Колхозăн 50 вĕлле пур. Кăçал Петрова юлташ тăрăшса ĕçленипе, кашни вĕлле 30 килограмм пыл илес вырăнне 49-шар килограмм илнĕ. Çапла вара Петрова юлташ ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 100 килограмм пыл илет.

ВАРМАНТА СТАХАНОВЛА ĔÇЛЕНЕШĔН — ПРЕМИ

Советски районĕн «Комбайн» колхоз членĕ Николай Кокорин кăçал çулла чугун çул валли 480 кубометр вутă турттарнă. Çапла вăл колхозăн пĕтĕм планне пĕчченех ĕçленипе тултарса çитернĕ. Çак кунсенче Кокорин юлташа 50 метр пусма тавар, 12 керепенке супăнь тата ытти таварсем парса премиленĕ.

КАШКĂР ТЫТНĂШĂН — ПРЕМИ

Шупашкарти пĕр заводри шофер П. Калинкин юлташ ĕçрен пуш вăхăтра час-часах ухатана çӳрет. Пĕррехинче вăл, Шупашкар районĕнчи Чантăр ялсоветĕнчи колхозсен сурăхĕсене кашкăр тытни çинчен пĕлнĕ хыççăн, çав кашкăра сыхлама тытăннă. Ухата ăнăçлă иртнĕ. Калинкин юлташ кашкăра тытнă, унăн тирне «Заготживсырье» Шупашкарти конторне панă. Çавăншăн ăна 300 тенкĕ укçа тата çăнăх парса премиленĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне—çĕрулмипе пахча-çимĕç

ÇĔРПӲ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те калама çук пысăк çĕкленӳпе пухусем пулса иртеççĕ. Çав пухусенче колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа тата вăл ноябрĕн 7-мĕшĕнче панă приказпа паллашаççĕ. Чаплă çĕнтерӳсем туса пыракан Хĕрлĕ Çара кашни колхозникех чунтан-чĕререн пулăшма тăрăшать. Ноябрĕн 10-мĕшĕнче пĕр кун хушшинчех Хĕрлĕ Çар фондне 3.120 пăт çĕрулми леçнĕ. Пирĕн районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 800 тонна пама пулнăччĕ, паянхи кун тĕлне хатĕрлев пунктне 736 тонна çĕрулми леçнĕ.

Нумай колхозсем малтан хăйсем илнĕ обязательствăран ирттерсе параççĕ. «Емĕт» колхоз 240 центнер вырăнне 270 центнер, «Богатырь» колхоз 140 центнер вырăнне 161 центнер, Çĕрпӳ хулинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 120 центнер вырăнне 131 центнер леçнĕ. Çавăн пекех «Пожанар», Леваневский ячĕпе тăракан колхозсем те хăйсен малтанхи обязательствинчен ирттерсе çĕрулми параççĕ.

Сталин юлташăн доклачĕпе хавхаланнă колхозниксем Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлĕ пысăк. Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми пама пулса илнĕ обязательствăна колхозниксем паян-ыранах пурнăçа кĕртеççĕ.

Д. МИТЬКОВ.
ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ.

* * *

СОВЕТСКОЕ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн районри колхозсем обязательство тăрăх государствăна çĕрулми парса татнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 650 тонна пама пулчĕç. Çак чыслă та патриотла обязательствăна районри 20 колхоз пурнăçларĕ ĕнтĕ. Тушкассинчи «Рекорд» колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 360 пăт, Тури Ачакри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 600 пăт çĕрулми пама пулнăччĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарнă кун тĕлне пурнăçларĕç. Çавăн пекех «Коминтерн» колхоз та 780 пăт, «Искра» колхоз 810 пăт, «Прогресс» колхоз 1800 пăт çĕрулми Хĕрлĕ Çар фондне леçсе пачĕç. Паянхи кун тĕлне районĕпе хатĕрлев пунктне 377 тонна çĕрулми леçнĕ.

Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми парас тĕлĕшпе Васькино ялсоветне кĕрекен колхозсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. «Красная Армия», «Добролет», «Ядро», «Заря», «Пробуждение», Ильич тата Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсем чăтма çук юлса пыраççĕ. Ку колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсен ĕçлес кăмăлĕ пысăк, анчах кунта çак ĕçе колхоз руководителĕсем чăрмантарса тăраççĕ.

Халĕ районри колхозниксемпе колхозницăсем аслă çулпуç Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă историллĕ докладпа паллашаççĕ. Кашни колхозрах пухусем пысăк çĕкленӳпе пулса иртеççĕ. Çак пухусенче пирĕн колхозниксем хăйсем Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми пама йышăннă обязательствăна ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр пурнăçлама пулаççĕ.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ

* * *

Муркаш районĕнчи «Самолет» колхоз членĕсем, Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклачĕпе хавхаланса, Хĕрлĕ Çар фондне васкасах çĕрулми параççĕ. Колхозниксен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕнче Отечественнăй вăрçă инвалидĕ А. Ердуков юлташ сĕннипе кашни ĕçлеме пултаракан колхозник 30-шар килограмм çĕрулми Хĕрлĕ Çар фондне пама йышăнчĕ. Çапла вара колхозниксем пурĕ 228 пăт çĕрулми пама тулчĕç. Çав çĕрулмине çийĕнчех хатĕрлев пунктне леçсе панă.

А. СМИРНОВ.

* * *

Октябрьски районри колхозсем государствăна çĕрулми парса татнă хыççăн Хĕрлĕ Çар фондне 650 тонна пама йышăннăччĕ. Районри нумай колхозсем хăйсем илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлаççĕ. Ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем государство склачĕсене 233 тонна çĕрулми леççе панă. Уйрăмăнах «Аниш», Буденный ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулми парас ĕçе организованно ирттерчĕç. Вĕсенчен кашниех 1080 пăт çĕрулми леçме пулнăччĕ, хăйсен обязательстине вĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах та уйрăм колхозсем хăйсем илнĕ обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Акă Кутемер ялсоветне кĕрекен колхозсенех илер. Çак ялсоветĕнчи «Коммунизм», «Красный борец», «Единство» тата «Путь Ленина» колхозсен, хăйсем йышăннă тăрăх, ноябрĕн 3-мĕшĕ тĕлнех 282 пăт çĕрулми леçмеллеччĕ. Апла пулин те Кутемерти «Коммунизм» колхоз йышăннă вăхăт тĕлне государствăна обязательство тăрăх памалли çĕрулмине те парса татман. Колхоз председателĕ А. Семенов юлташ ĕçе йĕркелесе, ертсе пырас вырăнне, час-часах колхозниксене пĕр сăлтавсăрах вăрçать, кăшкăрашать. Çапла вара колхозниксен ĕçлес кăмăлне сивĕтет.

Хатĕрлев пункчĕсен çавăрăнăçусăрлăхне те палăртмалла. Районри колхозсен Хĕрлĕ Çар фондне памалли çĕрулмине Вăрмара тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи складсене ăсатмалла. Сĕнтĕрвăрри спирт завочĕн дирекцийĕ çĕрулмине татти-сыпписĕр илмелле туман. Кунта час-часах лавсем кунĕ-кунĕпе кĕтсе тăраççĕ. Хăш чухне çĕрулмине йышăннă пулсан та, çавăн çинчен çийĕнчех документ памаççĕ. Караньял ялсоветне кĕрекен колхозсенчен илнĕ çĕрулмишĕн вăхăтра документ паманнине пула, вĕсен 30 центнер ытла çĕрулми ытти районсеннипе пăтрашăнса кайнă. Ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтерсе, Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулми парассине çывăхри ик-виç кун хушшинчех вĕçлемелле.

* * *

ЕЛЧĔК, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне 24.000 пăт çĕрулми пама йышăннăччĕ. Паянхи кун тĕлне хатĕрлев пунктне 18.000 пăт леçнĕ. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Зайцев юлташ) Хĕрлĕ Çар фондне 1.800 пăт çĕрулми панăччĕ. Сталин юлташăн доклачĕпе паллашнă хыççăн çак колхоз членĕсем çĕнтерӳ фондне тата 192 пăт леçсе панă. Çавăн пекех унпа ăмăртакан «Марс» колхоз та (председателĕ А. Гаязов юлташ) Хĕрлĕ Çар фондне 1.800 пăт леçнĕ. Патрекелĕнчи «Осоавиахим» колхоз (председателĕ А. Клементьев юлташ) çав фонда 1.434 пăт, Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Е. Мартынов юлташ) 1.482 пăт, Вырăскассинчи «Путь Ленина» колхоз 840 пăт çĕрулми панă.

ВУЛАВ ÇУРЧĔСЕМ ВАЛЛИ 2.500 БИБЛИОТЕКА

Белоруссии ССР-ĕнчи мĕнпур ялсоветĕсенче вулав çурчĕсем çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă. Вĕсем валли 2.500 библиотека хатĕрленĕ. (ТАСС).

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсене çапла ертсе пымалла-и вара?

ШĂХАСАН. Комсомол активĕн сентябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ районри пухăвĕ комсомолăн районри организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. ВЛКСМ райкомĕ пуçламĕш организацисене начар ертсе пынă, ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех палăртса пыман, çамрăк кадрсене воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Пуху çитменлĕхсене пĕтермелли тивĕçлĕ мероприятисене палăртса хăварнă.

Вăхăт сахал мар иртрĕ ĕнтĕ. Анчах та ВЛКСМ райкомĕ комсомолецсене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн решенине пурнăçлама тивĕçлипе мобилизацилемен-ха. Центральный Комитетăн решенине нумай пуçламĕш организацисенче ячĕшĕн кăна сӳтсе-явнă. Районри 78 организацирен 23 организаци çеç çак ыйтупа пуху ирттерни çинчен протоколсем тăратнă. Вĕсене те ячĕшĕн çеç çыркаланă, ĕçри çитменлĕхсене уççăн палăртман. Район центрĕнчи вăтам шкулти организацире вара ВЛКСМ Центральный Комитечĕн решенине халиччен сӳтсе-явман.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн решенийĕсенчен Шăхасан райкомĕ хăйне кирлĕ выводсем туман. Пуçламĕш организацисене оперативно ертсе пымасть, практикăллă пулăшусем памасть. Уйрăмăнах комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçĕнче çак çитменлĕхсем ытларах палăраççĕ. Комсомолăн Ухманти çичĕ çул вĕренмелли тата Шăхасанти вăтам шкулти организацисенех илер. Район центрĕнчи вăтам шкулта икĕ организаци. Анчах вĕсем паянхи куна çитсе те ĕçе тытăнман. Шкулта пурĕ 22 учитель. Вĕсен ретĕнче çамрăк учительсем чылай. Апла пулин те, комсомолăн учительсен организацийĕнче пурĕ те 4 çын çеç тăрать. Кăçал вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа комсомолецсен пухăвне ирттермен. Шкул ачисен организацийĕ те учительсене вĕрентӳпе воспитани ĕçне туса пыма пулăшмасть.

Комсомолăн Шăхасан вăтам шкулĕнчи организацийĕсем çирĕп дисциплинăшăн кĕрешмеççĕ. Çавна пула ачасем шкулти дисциплинăна çирĕппĕн пăхăнмаççĕ. Вăтамрах илсен, кунсерен 20—30 ача шкула пымасть, кунсăр пуçне 8—10 ача урока кая юлса пыраççĕ. Комсомол организацийĕсем вара çак çитменлĕхсемпе килĕшсе лараççĕ. Шкулти тасалăхпа культурлăхшăн кĕрешмеççĕ. Коридорсенчи стенасем çинче пĕр лозунг та, пĕр плакат та çук. Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме те комсомолăн шкулти организацийĕсем шкула çителĕксĕр пулăшнă. Çавăнпа кунта хĕле валли çителĕклĕ тарам вутă хатĕрлеймен.

Мĕнле пулăшу панă-ха ВЛКСМ райкомĕ çак шкулти организацисене? Вăтам шкулта райком çурчĕ юнашарах лараççĕ пулин те, комсомол райкомĕн работникĕсем тата унăн секретарĕ Иванов юлташ çак шкулти организацисенче пĕре те пулман. Комсомолăн шкулти организацийĕсен секретарĕсем те райкома çӳремен.

Çавăн пекех комсомолăн Ухманти 7 çул вĕренмелли шкулти организацийĕ те комсомолецсен пĕлӳлĕхне ӳстерес тата шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет. Ачасем шкула пурте çӳремеççĕ е уроксене кая юлса çитеççĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче кунта вĕренекенсен организацийĕ те пулнă. Анчах вăл саланса кайнă. Комсомол организацин секретарĕ Федорова юлташ хăй пĕччен кăна тăрса юлнă. Михаил Петровпа Николай Прокопьев 1943 çулхи апрель уйăхĕнче комсомола кĕме заявлени панă пулнă. Çав заявленисене кăçал сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче тин пăхса тухнă. Çапла ĕçлесен, ăçтан комсомол йышĕ ӳстĕр-ха. ĕнтĕ? Кунта комсомол докуменчĕсене, пуху протоколĕсене питех те тирпейсĕр çырса пыраççĕ. Пуçламĕш организацин секретарĕ Н. Егорова юлташ ку ĕçре çĕнĕ çын, комсомола илес тата протоколсене çырса пырас йĕркесене пĕлмест. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Иванов юлташ çак организацире виçĕ хут пулса та Егорова юлташа тивĕçлĕ пулăшу паман. Егорова юлташ хăй те ĕçлеме вĕренме тăрăшман.

Комсомолăн ытти шкулсенчи организацийĕсем те (вĕсем пурĕ 12) çак организацисем пекех çителĕксĕр ĕçлеççĕ. ВЛКСМ райкомĕ тата шкулсем енĕпе ĕçлекен ялан лăх комисси председателĕ Артемьева юлташ шкул ыйтăвĕпе сахал интересленеççĕ.

ВЛКСМ райкомĕ комсомолăн шкулсенчи организацийĕсене ертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатма тивĕçлĕ.

З. МИТРОФАНОВА.
(«Чăваш Коммуни» корр.)

Вĕренекенсене вĕри апат çитереççĕ

ЕЛЧĔК. Кушкăри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсене вĕри апат çитерес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Столовăй валли шкул хăйĕн участокĕнче 25 центнер тырă, 160 пăт çĕрулми туса илнĕ. Кунсăр пуçне шкула колхозсем чылай пулăшаççĕ. Сăмахран, «КИМ» колхоз шкула 39 центнер тырă, 64 центнер çĕрулми тата 10 центнер купăста, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 12 центнер тырă, 20 центнер çĕрулми, 5 центнер купăста парать. Çапла вара çав çимĕçсем пурте вĕренекенсене çулталăкĕпех çитеççĕ.

(«Колхоз ялавĕ»).

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă май ют çĕршывсенчи политика деятелĕсем яна саламсем

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă май çаксем саламсем янă: ССCР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Калинин юлташ ячĕпе — Голланди королеви Вильгельмина, Эквадор президенчĕ Веласко Ибарр, Куба республикин президенчĕ Рамон Грау Сан Мартино, Румыни королĕ Михай;

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ тата Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ячĕпе — Италири коммунистсен партийĕн Центральный Комитечĕ; Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министрĕ Стимсон господин; Болгари министр-президенчĕ Кимон Георгиев;

СССР Халăх Комиссарĕсен Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ ячĕпе —Коста-Рика Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Х. Акоста.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президентне суйлани çинчен

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС корреспондентĕнчен телефонпа). Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 16 сехет тĕлнелле пухăннă даннăйсем тăрăх, президент суйлавĕнче панă сасăсем çакăн пек пайланаççĕ: Рузвельтшăн 24.249.098 сасă панă, Дьюишĕн — 21.195.298 сасă.

Ку цифрăсем суйлавра пулкă пĕтĕм халăхăн 94 процентне тивеççĕ. Вĕсенчен çакă курăнса тăрать: Рузвельт 36 штатра малта пырать, çав штатсенче мĕн пурĕ 432 выборщик. Дьюи 12 штатра малта пырать, вĕсенче 99 выборщик.

Çав цифрăсенченех тата çакă курăнса тăрать: конгресра демократсем пите нумай вырăн илеççĕ; сенатра вĕсем 56 вырăн илеççĕ, республиканецсем унта 37 вырăн илнĕ. Представительсен палатинче демократсем 241 вырăн илнĕ, республиканецсем — 185. Темиçе вырăн хăш партин пулассипе паллă мар-ха.

Суйлавсене миçе сасă панине пĕтĕмĕшпех татăклăн шутласа тухман-ха.

ФИНЛЯНДИРЕ «ФИНЛЯНДИ—СОВЕТ СОЮЗĔ» ЯТЛА ОБЩЕСТВĂН 52 ОТДЕЛЕНИЙĔ УÇАЛНĂ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Вапасана» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Финляндин тĕрлĕ пайĕсенче «Финлянди—Совет Союзĕ» ятлă обществăн 52 отделенине уçнă. Вĕсенче тăракан членсен шучĕ 20.000 çынтан иртет. Тата 30 отделение яхăн уçаççĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Мец хулипе Нанси хули секторĕнче Мозель шывĕ улăхĕнчен хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ; халĕ союзниксен çарĕсен чаçĕсем Вивье хули таврашне çитнĕ.

Понт-а-Муссон хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра союзниксен çарĕсем Сель шывĕнчен хĕвелтухăçнерехри Морвиль-ле-Вик пункчĕ патне тата Гремси вăрманĕнчен икĕ миля çурă çурçĕртерехри Эльнуа вăрманĕ районне çитнĕ. Понт-а-Муссон хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Шемино хулинчен иртсе кайнă та малалла куçса пыраççĕ. Мозель шывĕн тепĕр хĕрринче союзниксен çарĕсем Тионвиль хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă.

Гюртген районĕнче, Шмидт хулинчен хĕвеланăçнерехре, тата Гюртген хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра çав-çавах йывăр çапăçусем пыраççĕ. Фоссенакра союзниксен çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Кăнтăр-хĕвеланăç Голландире Мурдейк районĕнчи кĕперсем патне пымалли вырăнсенче тата Вальхерен утравĕ çинче тăшман хирĕç тăма пăрахнă.

Союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем çĕр çинчи çарсене пулăшса пынă тата тăшманăн Голландипе Германири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Америкăн 1.200 йывăр бомбардировщикĕ ытла Франкфуртри, Карлсруэри тата Людвигсхафенри чугун çул деповĕсене тапăннă. Бомбардировщиксене 650 истребитель хӳтĕлесе пынă.

Англи бомбардировщикĕсем Германин Золинген ятлă промышленноçлă хулине çĕнĕрен тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: ноябрĕн 7-мĕшĕнче Америкăн 1.100 бомбардировщикĕ Гамбурга тата Рур облаçне тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Ганновера тата Хĕвеланăç Германири ытти объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 9-мĕшĕнче «Вĕçекен крепость» йышши 1.300 ытла бомбардировщик, 500 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Мец хули районĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи экспедициллĕ вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Монте Казалуда ятлă паха тӳпеме тытса илнĕ тата Германи çарĕсен темиçе вăйлă атакине сирсе янă. Флоренципе Форли хушшинчи çултан çурçĕртерехри туллă вырăнта та союзниксен çарĕсем чылай малалла кайнă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çеç кĕрешнĕ. Ĕнер Америкăн йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Югославире пухăна-пухăна тăнă çарĕсем çине тата унăн Çурçĕр Италири чугун çул объекчĕсемпе кĕперĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире. Форли хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре. 8-мĕш арми чаçĕсем тăшманпа хаяррăн çапăçнă, тăшман вăйлă хирĕç тăнине пăхмасăрах, малалла кайнă. Унтан хĕвеланăçнерехре 8-мĕш арми чаçĕсем Монтоне шывĕн икĕ хĕррипе те чылай малалла кайнă, темиçе паха пункта тытса илнĕ. Хаяррăн çапăçнă хыççăн союзниксем Флоренципе Форли хушшинчи шоссе çулĕ çинче Довадола хулине йышăннă. Хĕвеланăç енче, тинĕс хĕрринчи секторта, 5-мĕш арми чаçĕсем икĕ яла йышăннă. 5-мĕш арми фрончĕн ытти участокĕсенче патрульсем çеç кĕрешнĕ тата артиллери перкелешнĕ.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиаци 1.400 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армин Англи чаçĕсем Форли хулипе çулсен центрне йышăннă, унтан Форли хулинчен кăнтăртарахри районта тăшмантан тасатнă. 5-мĕш арми секторĕнче патрульсем çеç çапăçнă.

Çумăрсем çунипе тата йĕри-тавра лайăх курăнман пирки ноябрĕн 9-мĕшĕнче авиаци вăйлă кĕрешме пултарайман.

Хаçатра пичетленсе тухнă заметкăсем тăрăх

„Лашасемшĕн кам хуçа?“

Кăçал октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн хаçатра çакăн пек ятлă заметка пичетленсе тухрĕ. Çав заметкăра Муркаш районĕнчи «Çĕнĕ хунав» колхозра лашасене хисеплеменни çинчен çырнăччĕ.

Муркаш райçĕрĕç пайĕнчен çырса пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра кăтартса панă фактсем пурте тĕрĕс пулнă. «Çĕнĕ хунав» колхоз правленийĕ, çак ыйтăва хăйĕн ларăвĕнче пăхса тухса, кĕсресене хăм пăрахтаракан çынсене штраф тӳлеттермелле тунă, бригадирсене лашасем пăхас ĕçре ответлăх туйманшăн асăрхаттарса хăварнă.

Редакцие килнĕ почтăран

Кино кăтартассине хăçан лайăхлатĕç-ши?

Вăрнар районĕн центрĕнчи клуб умĕнче кашни кунах кино пуласси çинчен пĕлтерӳ çырса çапаççĕ. Кино курма çынсем те сахал мар çӳреççĕ. Анчах картина курас вырăнне час-часах ахалех каялла кайма тивет. Пĕр картинăна 9 сехетрен пуçласа 12 сехетчен кăтартсан та, вĕçне çитиччен кăтартса пĕтерейместĕ. Мĕншĕн тесен час-часах лентăсем татăлса каяççĕ е тата мĕн те пулин пулать. Çапла вара тепĕр чухне билетсем илсен те картинине кăтартмасçĕ.

— Картинăна мĕнле кăтартнине манăн ĕç çук, ман план тултарас пулать, — тет вăл.

В. КИРИЛЛОВ.

СССР НАРКОМЗЕМĔНЧЕ ХУРТ-ХĂМĂР ПĂХАКАНСЕН КАНАШЛĂВĔ УÇАЛНĂ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче Мускавра хурт-хăмăра чи лайăх пăхакансен канашлăвĕ уçалнă. Ăна СССР Наркомземĕпе РСФСР Наркомземĕ пĕрле пухнă. Колхоз фермисен заведующийĕсем, хурт-хăмăр пăхакансем, зоотехниксем, наука тĕлĕшпе ĕçлекен çынсем хурт-хăмăр пăхас тĕлĕшпе çак юлашки çулсенче пухнă опыт çинчен каласа панă. Канашлура хурт-хăмăр пăхакан чаплă çынсем Ферапонт Головатый, орденоносец Миляев, Куприна, Репа тата ыттисем те пур; вĕсем колхозри утарсен тухăçлăхне пуринчен те ытларах ӳстернĕ. Канашлу темиçе кун пырать. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Халь уçăлакан электротехника техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: техникум секретарĕ, вĕренӳ пайĕн секретарĕ, комендант, бухгалтер, агент-кладовщик, истопниксемпе уборщицăсем, гардеробщиксем, дворник.

Ĕçукçи — килĕшнĕ тăрăх. Коменданта, дворнике тата истопнике хваттер параççĕ. Техникумра ĕçлекенсем столовăйра апатланаççĕ тата вĕсене завод магазинĕ çумне çирĕплетеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. К. Маркса, 82.

5—1.

Шупашкарти пир-авăр фабрикине çакăн пек работниксем кирлĕ: рабочисем тата вĕренекенсем, шут ĕçĕнче ĕçлекен работниксем, слесарьсем, электромонтерсем, платниксем, малярсем, штукатурсем.

Фабрикăн столовăйĕ тата продуктсен магазинĕ пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Володарского, дом 1, Хлопчатобумажная фабрика.

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

Майданек

(«Майданекри лагерь». Чăваш АССР издательстви. 1944 ç. Шупашкар, 38 стр.).

Чăвашсен Государство издательстви Борис Горбатовăн «Майданекри лагерь» ятлă кĕнекине чăвашла куçарса пичетлесе кăларнă. Ку кĕнекере нимĕçсем Люблин хули çывăхĕнче тунă вилĕм лагерĕ çинчен каласа панă, унта нимĕçсем тунă тискер ĕçсене кăтартса панă.

Фашистла нимĕç тискер кайăкĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче тунă тискер ĕçсем çинчен илтмен совет çынни çук пулĕ, нумайĕшĕ çав тискерлĕ ĕçсене хăйсен куçĕсемпе курнă, хăйсем тӳснĕ.

Эпир нимĕçсем Краснодарта совет çыннисене «душегубкăсенче» çĕршерĕн-çĕршерĕн вĕлерни çинчен, Харьков çывăхĕнчи хăрушă ĕçсем çинчен лайăх пĕлетпĕр. Эпир Катын вăрманĕнчи трагедие те манман. Фашистла вăрă-хурахсем совет çĕрĕ çинче мĕн хăтланнисене эпир лайăх астăватпăр. Вĕсем совет çыннисене, гитлерла тискер кайăксен пусмăрне тӳссе пурăнма килĕшменскерсене, çав тери асап кăтартса вĕлернĕ. Халĕ гитлеровецсем пирĕн совет çыннисене мĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтерни çинчен тĕрĕс калама та çук. Вăрçă

вецсем тĕрлĕ нацисен çыннисене массăллăн вĕлернĕ.

Майданекри лагерь — çынсене пĕтермелли чи пысăк лагерьсенчен пĕри пулнă. Унăн хапхи çинче: «Кунта кĕрекен, хăвăн пур шанчăксене те пăрах. Кунтан каялла тухмаççĕ»,—тесе çырма пулнă. Оккупациленĕ Европăри пур çĕршывсенчен те çак лагере çынсене тиенĕ транспортсем килнĕ. Российйăпа Польшăн оккупациленĕ районĕсенчен, Францирен, Бельгипе Голландирен, Греципе Чехословакирен, Австрипе Италирен тата ытти нумай çĕртен килнĕ транспортсем.

Люблин хули çывăхĕнчи Майданек лагерĕнчи тискер ĕçсем — лагерьти çынсемпе палачсен ĕçĕ кăна мар. Вĕсен хыçĕнче вĕсене ĕскĕртсе тăракан тĕрлĕрен фюрерсем тăнă. Вĕсем пурте çав тискер ĕçсене хăйсен бандичĕ—Гитлер хушнипе тунă. Ирсĕр бандит Гитлер хăйĕн йыттисене Европа тăрăх кăларса янă. Вĕсенчен чылайĕшĕн ячĕсене халĕ эпир пĕлетпĕр ĕнтĕ. Вăхăт çитĕ, вĕсем пурте такан çинче çакăнса тăрĕç.

Нимĕçсем Люблин хули патĕнчи Майданекри

ратса хăварчĕç! Çав çынçиенсемпе пирĕн калаçу кĕске пулĕ. Вилĕм вĕсене! Пур «фюрерсем» те, кĕçĕнни те асли те, хăйсен вилĕмне тĕрĕслĕх судĕнче тупĕç.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, пирĕн союзниксен çарĕсем фашистла Германие хĕвелтухăçĕнчен те, хĕвеланăçĕнчен те тата кăнтăртан та хупăрласа илчĕç. Пирĕн Хĕрлĕ Çар ĕнтĕ фашистла тискер кайăксен йăвине — Хĕвелтухăç Пруссие кĕрсе кайрĕ. Пирĕн союзниксен çарĕсем нимĕçсен Аахен хулине кĕчĕç. Вăрçă нимĕç хулисемпе ялĕсене те çитсе кĕчĕ. Эпир халĕ вăрçă преступникĕсене арестлени çинчен вулатпăр. Ку пуçламĕшĕ çеç-ха. Вăхăт çитĕ, гитлерла империалистсем, миллионшар халăхăн куççульне юхтаракансем, хĕрарăмсемпе ачасен юнĕшĕн пĕтĕмпех ответ тытĕç! Çав кун инçе мар, вăл çывхарса килет.

Кĕнекере Борис Горбатовăн «Майданекри лагерь» тенĕ статьисĕр пуçне «Нимĕçсен Майданек лагерĕнчи тискер ĕçĕсем» пирки ТАСС пĕлтернĕ материалсене тата «Фашистла финн захватчикĕсем Карел-Финн ССР-ĕн территорийĕ çинче тунă тискер ĕçсем çинчен» пĕлтернине кĕртнĕ. Асăннă материалсене фронтовик-писатель Л. Агаков куçарса уйрăм кĕнеке туса хатĕрленĕ. Куçарасса ăнланмалла чĕлхепе куçарнă.

Ку кĕнеке кашни агитаторшăн, пропагандистшăн...

М. АНДРЕЕВСКИЙ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕсен 3—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00787 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59х42 п. л. Тираж 16.000 экз.